Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнченпе тухать

85-86 (7616-7617) №№ * Шăмат кун, 2008 çулхи ноябрĕн (юпа) 8-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

**Ноябрĕн 10-мĕшĕнче – Милици кунĕ**

**ХИСЕПЛĔ МИЛИЦИ ĔÇЧЕНĔСЕМПЕ ВЕТЕРАНĔСЕМ!**

***Сире çывхарса килекен професси уявĕпе – Милици кунĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп.***

***Эсир обществăлла йĕркелĕхе, граждансен сывлăхĕпе пурнăçне, вĕсен Конституципе пăхнă прависене хӳтĕлетĕр. Саккун тата йĕрке хуралĕнче тăракансен ĕçĕ нихăçан та çăмăл пулман. Йывăрлăхсене, нимĕнле хăрушлăха пăхмасăр лăпкăлăхпа тăнăçлăха сыхлатăр. Хăюлăхпа хастарлăх, чăтăмлăхпа çивĕчлĕх, хăвăр ĕçĕршĕн çунса тăни вĕçĕхĕррисĕр пулни кирлĕ çакна валли. Право йĕркине сыхлакан органсенчи ветерансен ырă йăли-йĕркисене малалла тăсатăр эсир. Хăвăрăн професси тивĕçне чун-чĕре хушнă пек тата чыслăн пурнăçлатăр. Тавах сире çакăншăн.***

***Сирĕн ĕçĕр-хĕлĕр районăн экономикăпа социаллă пурнăç аталанăвĕнче пысăк пĕлтерĕшлĕ. Преступленисене сирсе ярас, вĕсен йышне чакарас, уçса параслăхне ӳстерес, çул çитмен çамрăксем тӳрĕ çултан ан пăрăнччăр тесе хăвăртан килнине йăлтах тăватăр. Эсир малашне те хăвăрăн професси тивĕçĕсене таса чун-чĕререн пурнăçласса шанас килет.***

***Пурсăра та çирĕп сывлăх, ăнлану, телей сунатăп. Çемйĕрсенче те, çĕр-шывра та лăпкăлăх хуçалантăр. Çывăх çыннăрсен ăнланăвĕ пурнăçра вăй-хал парса тăтăр.***

**Район пуçлăхĕ Ю.А. ИВАНОВ.**

# Чĕрĕк ĕмĕр ытла шкулта



***Ирина Федоровна Кожевникова Москакассинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулта 26 çул ĕçлет ĕнтĕ. Ачасене тарăн пĕлӳ тата тĕрĕс воспитани парассишĕн чунне парса тăрăшать вăл. Кунсăр пуçне Муркашри çамрăк техниксен станцийĕн «Умелые руки» кружокне ертсе пырать. Иртнĕ çул çак кружок членĕ А. Алексеева ăсталанă «Карусель» хатĕр районта 1-мĕш вырăна тухма пултарнăччĕ.***

***Москакасси шкулĕ кăçал ноябрь уйăхĕнче 100 çул тултарать. Çак пысăк уява хатĕрленеççĕ хальхи вăхăтра кружок членĕсемпе унăн ертӳçи.***

***Сăн ӳкерчĕкре: Ирина Федоровна урок вăхăтĕнче.***

**Актуаллă**

## Президент Çырупа тухнă

Ноябрĕн 5-мĕшĕнче Раççей Федерацийĕн Федераци Канашĕн тата Патшалăх Думин пĕрлехи ларăвĕ иртнĕ. Унта РФ Президенчĕ Дмитрий Медведев Федераллă Пухăва яракан çырăвне вуласа панă. Сăмах май, пĕрлехи лару ĕçне Дмитрий Медведев чĕннипе Чăваш Ен Президенчĕ Николай Федоров та хутшăннă.

Хăйĕн пĕрремĕш Çырăвĕнче Дмитрий Медведев Президент пирĕн пурнăç нормин тĕп тытăмĕсене, Раççей обществин тĕллевĕсемпе хаклăхĕсене палăртнă. Мораль хаклăхĕсемпе нравственность ориентирĕсем Раççей гражданĕсене пĕр пĕтĕм халăх пулма май пачăççĕ.

Çĕр-шывăн патшалăх управленийĕпе политика структурине лайăхрах йĕркелессин мерисене палăртнă. Вĕсем граждансене политика пурнăçне анлăрах явăçтарассипе, влаçри халăх представителĕсен шайĕпе пахалăхне ӳстерессипе çыхăннă.

Дмитрий Медведев Конституцие тӳрлетӳсем кĕртме, çĕр-шыв Президенчĕн полномочийĕн срокне 6 çула, Патшалăх Думинне 5 çула çити тăсма сĕннĕ. Çĕр-шыв пуçлăхĕ парламентăн конституци прависене ӳстерме тата ĕç тăвакан влаç тĕлĕшпе тĕрĕслев функцийĕсене Патшалăх Думи çине хума сĕннĕ.

Шкул вĕрентĕвĕ çинче чарăнса тăнă май, Дмитрий Медведев хальхи вăхăтра хатĕрлекен «Пирĕн çĕнĕ шкул» наци вĕрентӳ стратегийĕн пĕлтерĕшĕ пысăк пулнине палăртнă.

Çавна та каласа хăвармалла. Темиçе çул каяллах Н. Федоров çĕр-шыв Президенчĕн полномочийĕн срокне ӳстерме сĕннĕ, Д. Медведев Чăваш Енре пĕрремĕш хут пулнă чухне вара шăпах ĕнтĕ пирĕн республикăра шкул реформине пурнăçа кĕртессин ыйтăвĕсене сӳтсе явма чылай вăхăт уйăрнă.

**Тăван çĕр-шыва хураллама**

# «Çара каясси – манăн йышăну»

Çар ретне тăрасси хăратмасть-и тесе ыйтсан, шăпах çапла хуравларĕ кĕçех салтак пулма хатĕрленекен Муркаш каччи Дима Куликов. Ăна çак тивĕçлĕ утăмран «çăлас» тесе хăрушă çар халапĕсене илтнĕ юлташĕсем те, тăванпĕлĕшĕсем те темиçе хутчен ӳкĕте кĕртме тăрăшнă. Хăйĕн умне çирĕп тĕллев лартнă каччă парăнман. Училище хыççăн Муркашри кирпĕч заводĕнче ĕçлеме ĕлкĕрнĕ. Çара каясси вара уншăн нихăçан та йывăр ыйтусен шутĕнче пулман...

Иртнĕ эрнере район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов тата Муркашпа Элĕк районĕсен çар комиссарĕ А.Г. Прокопьев алла повестка панă чухне те вăл савăнăçлисен шутĕнчех пулчĕ.



Дима пек çамрăксем пирĕн комиссариатран пурĕ 115-ĕн Раççей Çарĕнче пĕр çул хĕсметре тăрĕç. Çак кĕске вăхăтра çар ăсталăхне туллин алла илме, паллах, çăмăл пулмĕ. Анчах çара кайма хатĕрленекенсенчен нумайăшĕ шăп та лăп çак тапхăр пĕр çул пулнишĕн ытла пăшăрханманнине калаççĕ. «Малтанхи пек икĕ çул пулнă пулсан кăмăлсем çаплах пулĕччĕç-ши?» – тесе ыйтсан, пĕрисем шухăша путрĕç, теприсем вара хăйсен йышăнăвĕсем паян кăна çуралманнине пĕлтерчĕç. Акă Мăн Сĕнтĕр тăрăхĕнчи Владимир Буронов çарти алăпа кĕрешессине вĕренме 9 çул ятарлă секцие çӳренĕ. Мĕн пĕчĕкренех «спецназ» сăмах чĕлхи çинчен те кайман унăн. «Çара кайма эпĕ тахçанах хатĕр», – питĕ шанчăклăн та лăпкăн хуравларĕ каччă. Çакнашкаллисем кирлĕ те пирĕн çарта – çирĕп кăмăллисем.

Ахальтен мар Мăн Сĕнтĕрти тĕслĕх библиотекăра иртнĕ призывниксен кунĕнче Юрий Александрович маттур ентеш Евгений Борисов шăпи çинче те чарăнса тăчĕ. Атте-аннене, тăван киле, Тăван çĕр-шыва юратни кашни салтаках йывăр самантсенче пулăшнине аса илтерчĕ. Паянхи самана лăпкăлăхпа палăрсах тăмасть пулин те, пулас салтаксен вара пурин те лăпкă вырăнсене çеç лекмелле пултăрччĕ. Çар пурнăçне килĕштернисем вара контракт çырса унтах юлма пултарĕç. Çак ыйтăва Александр Геннадьевич комиссар тĕплĕн ăнлантарса пачĕ. Çав вăхăтрах алла тĕрлĕ специальноç илсе таврăнма та сунчĕ вăл каччăсене. Пурнан пурнăçра, чăн та, тем тĕрлĕ ĕçе пĕлни те кирлĕ пулĕ. Уйрăмах – арçынсен. Çартан арçын пулса таврăнаççĕ-çке çамрăк каччăсем. Авалтанпах çапла каланă...

Мăн Сĕнтĕр чиркĕвĕн настоятелĕ Игнатий атте кунта килнĕ кашни призывниках хӳтĕленмелли пиçиххи пачĕ, кĕлĕ вуласа пиллерĕ. Район администрацийĕн вĕрентӳ пайĕ ĕнерхи шкул ачисене парнесем парса хавхалантарчĕ. З.Ю. Дипломатова çарта пулнă арçынсен малаллахи ĕç те, пурнăç та ăнăçлăрах пулнин сăмахĕсене каччăсем асрах тытасса шанас килет. Хăшĕсен, тен, çартан таврăнсан тăван районтах ĕçлес шухăшсем çуралĕç. Шалти ĕçсен пайĕн ертӳçи Е.Д. Макаров та çамрăксене Муркашрах кĕтессине пĕлтерчĕ. Вăл каланă тăрăх салтака присяга сăмахĕсене асра тытни те çарта пулăшу парать.

Мĕнех, аслисен сăмахĕсем салтаксен пурнăçĕнче вырнаçуллă пулччăр. Ывăл ачасем вара сывлăхĕсене упраса юратнă амăшĕсем патне «служба аван пырать» тесе çырса кĕтекенсен чунĕсене лăпкăлăх парнелеччĕр.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

**Республикăра**

## Чи лайăххине палăртĕç

Чăваш Республикин Вĕрентӳ тата çамрăксен политикин министерстви республикăри шкулсенчи класс ертӳçисем хушшинче «Чи лайăх класс ертӳçи» конкурс ирттересси пирки пĕлтернĕ. Республикăри шкулсенче пурĕ 6723 вĕрентекен класс ертӳçин ĕçĕсене пурнăçлать. Асăннă конкурса 2006 çултанпа ирттереççĕ. Пĕлтĕр унта 3413 класс ертӳçи хутшăннă. Вĕсенчен 15-шĕ çĕнтернĕ.

Конкурса класс ертӳçин професси статусне ӳстерес, шкул ачисене воспитани парас ĕçе лайăхлатас тĕллевпе ирттереççĕ. Кăçал класс ертӳçисем ĕçри çĕнĕлĕхсемпе паллаштарĕç. Конкурсăн малтанхи тапхăрĕнче вĕренекенсен çемйисене явăçтарса ятарлă мероприятисем ирттерĕç. Ăна чӳк уйăхĕн вĕçĕнче пĕтĕмлетĕç.

**Саламлатпăр**

## ЧР Хисеп грамотине тивĕçнĕ

Ĕçри çитĕнӳсемшĕн тата нумай çул тӳрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн Чăваш Республикин Президенчĕн 2008 çулхи чӳк уйăхĕн 1-мĕшĕнчи 110-мĕш указĕпе килĕшӳллĕн республикăн ачасене хушма пĕлӳ паракан Муркашри Олимп резервĕсен ачасемпе çамрăксен «Олимп чемпионки В. Егорова ячĕллĕ ятарлă спорт шкулĕ патшалăх вĕрентӳ учрежденийĕн директорне **Александр Александрович СИДЮШКИНА** Чăваш Республикин Хисеп грамотипе наградăланă.

**Партисен пурнăçĕнчен**

## Проекта хутшăнма чĕнетпĕр

Сăмах кунта «Единая Россия» ирттерекен «Кадрсен резервĕ – çĕр-шывăн професси команди» проект пирки пырать.

Проектăн тĕллевĕ – пултаруллă, ăслă-тăнлă, инновациллĕ шухăшлама пултаракан çамрăк ертӳçĕсене малалла аталанма майсем туса парасси. Ку вăл çак специальноçсемпе пулса пырĕ:

– бизнес;
– массăллă информаци хатĕрĕсем;
– патшалăх тата муниципаллă управлени;
– парти строительстви тата обществăлла ĕç-хĕл;
– социаллă сфера.

Кандидатсем 25–45 çулта пулмалла. Обязательнăй йĕркепе управлени ĕçĕн опычĕ (проектсене «нульрен» тытăнса йĕркелесе пурнăçа кĕртме пултарнин, коллективлă проектсен управленийĕн опычĕ т. ыт. те), шухăшлавăн инноваціллĕхĕ (задачăсене çĕнĕлле майсемпе татса пани, ĕçре эффективлăха тĕпе хуни).

«Кадрсен резервĕ – çĕр-шывăн професси команди» проекта «Единая Россия» ирттерет, партин приоритетлă проекчĕ пулса тăрать. Федераллă эксперт канашне РФ Патшалăх Думин Председателĕ Б.В. Грызлов ертсе пырать.

Проект парти анлăшĕпе кăна çыхăнса тăмасть. Проекта политика тĕлĕшĕнчи шухăшлавсене пăхмасăрах кирек кам та хутшăнма пултарать.

Участникăн пĕрремĕш тапхăрти анкетине 2008 çулхи ноябрĕн 10-мĕшĕччен çак адреспа çырса памалла: http://prokomanda.edinros.ru

Хăвăра интереслентерекен ыйтусемпе проектăн регионти координаторĕ патне (8352)62-25-56 телефонпа шăнкăравлама пултаратăр.

**Официально**

## В сегодняшнем номере - Приложения к райгазете

В Приложениях к райгазете от 8 ноября 2008 года печатаются:

- решение Моргаушского районного Собрания депутатов от 17.10.2008 г. № С-28/1 «Об итогах исполнения районного бюджета Моргаушского района за 9 месяцев 2008 года»;
- решение Моргаушского районного Собрания депутатов от 17.10.2008 г. № С-28/2 «О внесении изменений и дополнений в решение Моргаушского районного Собрания депутатов от 30.11.2007 г. № С-22/3 «О районном бюджете Моргаушского района на 2008 год».

**Çырăнтару – 2009**

## Çитес çур çул валли çырăнтарăççĕ

**Районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата 2009 çулхи пĕрремĕш çур çулта илсе тăма çырăнтараççĕ. Ултă уйăха çырăнса илмелли хак – 191 тенкĕ 70 пус.**

**Хаклă вулаканăм, район хыпарçисĕр ан юлăр. Çитес çул та пĕрле пулар!**

**Райхаçат редакцийĕ.**